# ЧӖРИ ПУЛАСЛӐХШӐН ТАПНӐ

Г.СОЛОВЬЕВА

Наци библиотекин пай пуҫлӑхӗ

**В**УН тӑххӑрмӗш ӗмӗрӗн ккӗмӗш ҫурринче Вӑтам Атӑл тӑрӑхӗнчи халӑхсене ҫутта кӑларассишӗн чунтан тӑрӑшнӑ паллӑ ӗҫхеҫӗ, этнограф, фольклорист, статистик, педагог, археолог, историк Николай Иванович Золотницкий ҫуралнӑранпа 170 ҫул ҫитрӗ. Н.И.Золотницкий вырӑс лин те хӑйӗн ӗмӗрне ытларах чӑвашсем хушшинче пурӑнса ирттернӗ, ҫавна май унӑн кунне аван пӗлнӗ. Вӑл вӑтӑр ҫул ытла ырми-канми ӗҫлесе пысӑк пянлӑх хӑварнӑ.

Николай Иванович Золотницкий Хусан кӗпӗрнинчи Шупашкар уесӗнче, хальхи Сӗнтӗрвӑрри районне кӗрекен Урхас Кушкӑ ялӗнче 1829 ҫулхи раштав уйӑхӗн 15-мӗшӗнче вырӑс ҫемйинче ҫуралнӑ. Унӑн ашшӗ, Иван Васильевич Золотницкий, чӑвашсемпе туслӑ пурӑннӑ, хӑй прихутӗнчи хресченсене хута вӗрентме тӑрӑшнӑ. Прихут шкулӗнче учитель пулса ӗҫленӗ чух вӑл вӗрентӳ меслечӗсене лайӑхлатма пикеннӗ. Унччен шкулта ачасене вырӑс тата славян чӗлхисенче пӗр ӑнлантармасӑр вӗрентнӗ пулсан, Иван Васильевич вара ҫав йӗркене хирӗҫ тӑнӑ, вӗренекенсен тӑван чӗлхине пысӑк вырӑна хунӑ. Хӑй шкулӗнчи ачасене вӑл чӑвашла вӗрентнӗ.

И.В.Золотницкий хӑйӗн ывӑлне те чӑваш ачисемпе явӑҫтарнӑ. Николай ялти ачасемпе вылянӑ, юмахсем итленӗ, чӑваш юррисене юрланӑ. Ҫапла майпа чӑвашла аванах калаҫма пултарнӑ. Чӑваш чӗлхи уншӑн иккӗмӗш тӑван чӗлхе пулса тӑнӑ.

Малтан Николай Иванович Шупашкарти тӗн училищин учителӗ Петр Спиридонович Попов килӗнче вӗреннӗ, каярахпа асӑннӑ училищӗрен те вӗренсе тухнӑ. Ун хыҫҫӑн Н.И.Золотницкий Хусанти тӗн семинарине вӗренме кӗрет. Кунтан вӗренсе тухакансене пупа ӗҫлеме янӑ пулнӑ. Николай Иванович пупра ӗҫлесшӗн пулман. Вара вӑл 1847 ҫулта, семинарире вӗренме пӑрахса, тӗлӗве малалла ӳстерес тӗллевпе Хусан университечӗн историпе филологи факультетне вӗренме кӗрет.

Малтан тӗн ӗҫӗпе ӗҫлеме хатӗрленнӗ ҫамрӑк ҫын вӗренӳре урӑх ҫулпа каясси, паллах, тӳрех пулман. Сӑлтавӗ тӗрлӗ пулнӑ. Пӗренчен, вӑл ашшӗн чиркӳ ӗҫне ҫратман. Тепӗр енчен, Николай Ивановичӑн амӑшӗпе пӗр тӑван пулнӑ В.А.Сбоев профессор та, Хусантан Золотницкисем патне килсен, ӑна университета вӗренме кӗме хистенӗ.

Хусан университетӗнче филологи наукисене, Хӗвел тухӑҫ халӑхӗсен историне вӗренни Н.И. Золотницкин малашлӑхӗшӗн пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулнӑ. Кунта унӑн Атӑл тӑрӑхӗнчи вырӑс мар халӑхсен пурнӑҫне лайӑхрах пӗлес, вӗсене ҫутта кӑларас туртӑм пуҫланса каять.

1848 ҫулта В.А.Сбоев профессор Н.Золотницкий студента хӑйпе пӗрле экспедицие илсе кайнӑ. Николай Иванович чӑваш ялӗсенче юрӑсем пухнӑ, вырӑсла куҫарса хӑйӗн профессорне панӑ. Ҫав ҫулсенче Германирен Атӑл тӑрӑхӗнчи халӑхсен пурнӑҫӗпе чӗлхине тӗпчеме И.С.Фатер профессор килнӗ. Студент-тӗпчевҫӗ ӑна юрӑсен сӑввисенех латинла куҫарса панӑ. Сакӑр сӑввине В.А.Сбоевӑн "Исследования об инородцах Казанской губернии" ятлӑ кӗнекинче вулама пулать. Хӑш-пӗр сӑввисене 1849 ҫулта И.С.Фатер профессор Берлинта пичетлесе кӑларнӑ.

Пӗрремӗш курс пӗтернӗ студентшӑн хӑй пухнӑ чӑваш фольклор произведенийӗсем пичетленсе тухни паха пулнӑ, чӑваш культурине, чӗлхине тӗпчеме тата хытӑрах хавхалантарнӑ. Ку ӗҫре ӑна В.А.Сбоев малашне те пулӑшса тӑнӑ.

Н.И.Золотницкий университетран 1851 ҫулта вӗренсе тухнӑ. Ӑна Пенза гимназине аслӑ учитель пулса ӗҫлеме яма палӑртнӑ пулнӑ, вӑл хӑй те учитель ӗҫне кӑмӑлланӑ. Анчах ашшӗ-амӑшӗ ывӑлне тӑван килӗнчен инҫете яма килӗшмен. Уйрӑмах амӑшӗ, Елизавета Ивановна, хӑйӗн ывӑлне уездсенчи пуҫлӑхсем пек "пысӑк улпут" тӑвасшӑн ӗмӗтленнӗ. Ашшӗ ыйтнипе тата амӑшӗ ҫине тӑнипе Николай Иванович ирӗксӗрех, учителе каяс шухӑша пӑрахса, 1852 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 7-мӗшӗнче патшалӑх пурлӑхӗсен Хусанти палатине канцеляри ӗҫне кӗнӗ. Ку ӗҫ унӑн ӗмӗтне, ӑсхакӑлне тивӗҫтерме пултарайман. Вӑл коллежски секретарь чинӗнче тӑрса салтака илекен пай пуҫлӑхӗн ҫумӗ пулса ӗҫленӗ, каярахпа пуҫлӑх должноҫӗнче те ӗҫлеме тивнӗ.

Сывлӑх начар пулнипе Н.И. Золотницкий 1854 ҫулхи юпа уйӑхӗнче ӗҫрен тухса Урхас Кушкӑна таврӑнать, сывалса ҫитиччен килтех пурӑнать. Пӗр ҫулталӑкран амӑшне ӳкӗте кӗртсе /ун чух ашшӗ вилнӗ пулнӑ/ Вятка хулине тухса каять. Унта, вӑхӑтлӑха тесе, каллех патшалӑх пурлӑхӗн палатине ӗҫе кӗрет. Анчах кунта унӑн тӑватӑ ҫул ӗҫлеме лекет. Канцелярире канӑҫ тупаймасӑр Н.И.-Золотницкий литература ӗҫне тытӑнса пӑхать. Вӑл пуҫарнипе Вятка хулинче "Чӗнмен хӑна" /"Незваный гость"/ ятлӑ алӑпа ҫырнӑ ҫурма кулӑшла хаҫат тухма тытӑнать. Николай Иванович кулленхи пурнӑҫра пулса иртекен ӗҫсемпе хыпар-хӑнарсем ҫинчен ҫырнӑ, кунта унӑн сӑввисемпе статйисем те пичетленнӗ. Ҫапах та хаҫата икӗ номертен ытла кӑларайман.

1867 ҫулхи кӑрлач уйӑхӗнче Хусан кӗпӗрнин земстви тӗпчевҫе чӑваш шкулӗсене ертсе пыма шанать. "Чӑваш кӗнекисӗр" пуҫне вӑл "Чӑвашла вулама, шутлама та вӗренни" ятлӑ кӗнеке, ҫав икӗ кӗнекепе епле усӑ курмалли ҫинчен "Кӑтартусем". "Ҫулталӑк кӗнеки" /1867 ҫулхи календарь/, касса кӑлармалли сас паллисем тата тӗрлӗрен кирлӗ япаласем ҫырса хатӗрлет. "Чӑваш чӗлхин тӗп правилисем" ятлӑ кӗнеке те кӑларать.

Хӑйӗн шухӑш-ӗмӗчӗсене пурне те пӗлтерес тӗллевпе Н.И. Золотницкий кӗпӗрне хаҫатӗнче "Чӑвашсене вӗрентмелли меслетсем пирки" ятлӑ пысӑк статья пичетлесе кӑларать.

1875 ҫулта тӗпчевҫӗн вунӑ ҫул хушши ҫырнӑ "Корневой чувашско-русский словарь, сравненный с языками и наречиями разных народов тюркского, финского и других племен" ятлӑ кӗнеки пичетленсе тухать.

"Тымар сӑмахсен чӑвашла-вырӑсла словарӗнче" автор вунӑ ҫул ытла пухнӑ чӑваш сӑмахӗсене ытти нумай чӗлхери сӑмахсемпе танлаштарса тӗпченӗ, чӑваш чӗлхин тӗрлӗ чӗлхесем хушшинчи вырӑнне шыранӑ. Словарӗн пӗлтерӗшӗ хӑй вӑхӑтӗнче питӗ пысӑк пулнӑ. Тӗрӗк чӗлхисемпе чӑваш чӗлхине тӗпчекенсем унпа паян кун та хӑйсен ӗҫӗсенче усӑ кураҫҫӗ. Словарь икӗ пайран тӑрать. Пӗрремӗш пайӗнче чӑваш сӑмахӗсен тӗпӗсене алфавит йӗркипе вырнаҫтарса тухнӑ, кашни сӑмаха вырӑсла куҫарнӑ, сӑмах тӗпӗсене ытти тӗрӗк, монгол е финн-угор чӗлхисенче тӗл пулакан пӗрешкел сӑмахсемпе танлаштарнӑ, вӑл е ку сӑмах чӑваш чӗлхинче епле аталанса пынине, унта хӑш чӗлхерен кӗнине, манӑҫа юлнӑ сӑмахсен пӗлтерӗшне тӗпчесе тухнӑ. Тӗслӗхсене вырӑсла куҫарса ӑнлантарнӑ. Словарь авторӗ халӑх сӑвви-юррисенче, сӑмах-юмахӗсенче чӗлхе сӗткенӗ, пуянлӑхӗ, халӑх ӑс-тӑнӗн ахах-мерченӗ пуррине аван ӑнланнӑ, хӑй те чӑваш юррисене юратса юрланӑ, вӗсене ҫыра-ҫыра илнӗ.

Словарӗн иккӗмӗш пайӗ ятарласа хушса ҫырнӑ статьясенчен тӑрать. Ку статьясене Н.И.Золотницкий словаре кӗриччен Хусан кӗпӗрни хаҫатӗнче те, уйрӑм кӑларӑмпа та пичетленӗ. Кайран тепӗр хут ҫӗнетнӗ. Ҫав статьясенче чӑваш сӑмахӗсен пӗлтерӗшне анлӑлатса, этнографипе истори тӗлӗшӗнчен тишкерсе, ӑс-хакӑл аталанӑвӗпе ҫыхӑнтарса ӑнлантарнӑ, нумай сӑмах этимологине тӗпчесе тухнӑ.

Хушса ҫырнисенче ӑру-несӗл сӑмахӗсене, чӑвашсен уйӑх ячӗсене, астрологипе космогони терминӗсене, мифологири сӑнарсене, тумтир ячӗсене т.ыт. нумай кӑсӑклӑ япаласене Н.И.-Золотницкий тӗплӗн ӑнлантарнӑ. Паллӑ лингвист чӑваш топонимикинче тӗрӗкпе араб чӗлхисен элеменчӗсен тӳпи те пуррине уҫӑмлӑ палӑртнӑ.

Н.И.Золотницкий Шупашкар, Чулхула, Пӑва, Ҫӗрпӳ, Кӑрмӑш хулисемпе Карач, Турхан тата ытти ял ячӗсене тишкерсе тухнӑ. Ҫут ӗҫпе тӗпчевҫӗ ӗҫӗсене пӗрпӗринпе тачӑ ҫыхӑнтарса туса пынӑ. Ҫак словаре А.Видеман, В.Радлов академиксем, Й.Буденц, Б.Мункачи Венгри чӗлхеҫисем тата ытти паллӑ тӗпчевҫӗсем те пысӑка хурса хакланӑ.

Словарьте 1863 чӑваш сӑмахӗн пӗлтерӗшне вырӑсла куҫарса, тӗнчери 20 халӑх чӗлхипе танлаштарса ӑнлантарнӑ. Вӑхӑт иртнӗҫемӗн ҫак словарь чӑваш ҫырулӑхӗн палӑкӗ, тӗпчевҫӗсен сӗтелӗ ҫинчен кайман паха кӗнеке пулса тӑчӗ.

Тӑван чӗлхепе вӗрентме тытӑнас пулсан, пуҫламӑш тапхӑрта вулама, ҫырма, шутлама вӗрентмелли чӑвашла ҫырнӑ кӗнекесем кӑлармалла пулнӑ. Ку тӗлӗшпе Н.И.Золотницкий ҫакӑн пек сӗнӳсем панӑ: кӗнекесене ҫырнӑ чух вырӑс сас паллисемпе усӑ курсан аван, кун пек туни вырӑс кӗнекисене вулама ҫӑмӑллатать; кӗнекесене халӑх чӗлхипе ҫырмалла. Золотницкий унччен куҫарнӑ кӗнекесене тиркенӗ, халӑх чӗлхипе усӑ курса куҫарман тенӗ; Букваре ҫӑмӑллатнӑ сасӑ меслетне шута илсе хатӗрлеме хушнӑ. Вӑл тата вӗренекенсем валли чӑваш кӗнекисемпе епле ӗҫлемелли ҫинчен ҫырнӑ кӑтартусем кӑларма та сӗннӗ.

Хӑй кӑларнӑ кӗнекесене вӑл шӑпах ҫав сӗнӳсене тӗпе хурса хатӗрленӗ. Ку уйрӑмах "Чуваш кнеге" тата "Солдалык кнеги" ятлисенче аван курӑнать. "Чуваш кнеге" чӑвашсем валли ҫырнӑ пӗрремӗш букварь пулнӑ. вӑл икӗ хут, 1867 тата 1870 ҫулсенче, пичетленсе тухнӑ. Букварьте чӑваш сӑмахӗсене вырӑс сас паллисемпе ҫырнӑ. К.Д.Ушинский пекех, Н.И.Золотницкий малтанхи тапхӑрта уҫӑ сасӑсене вӗрентме сӗнет. Букваре чӑваш чӗлхинчи уйрӑмлӑхсене палӑртас шутпа икӗ уҫӑ сас палли кӗртнӗ: ӑ тата ӳ. Анчах кӗнекере уҫӑ сас паллисене вӗренме материал питӗ сахал панӑ, уйрӑм сӑмахсем илсе кӑтартман, пӗр уҫӑ сасӑпа тепӗр уҫӑ сасӑ ҫыхӑннине ҫеҫ кӑтартнӑ.

Атӑл тӑрӑхӗнчи халӑхсене тӗпчесе сӑнама ученӑйсем 1878 ҫулта Хусан университечӗ ҫумӗнчи археологи, истори тата этнографи обществи туса хураҫҫӗ. Н.И.Золотницкие ҫав общество совечӗн членне суйлаҫҫӗ. Общество лартнӑ тӗллевсенчен пӗрне пурнӑҫлас шутпа вӑл "Булгар, Биляр тата Морквашы ятсене лингвистика тӗлӗшӗнчен пӑхса тухни /Лингвистическая заметка о названиях Булгар, Биляр и Морквашы/" статья ҫырать.

Петербургра ӗҫлекен Вырӑс географи обществи 1879 ҫулта "Чӑвашла – вырӑсла словарь" ҫырнӑшӑн тата археологсен IV съездӗнче вуланӑ рефератсене хакласа Н.И.Золотницкие чи чаплӑ парне панӑ, пысӑк ылтӑн медальпе наградӑланӑ.

Н.И.Золотницкий чӑваш чӗлхине тӗпчеме пултаруллӑ ҫамрӑксене явӑҫтарма тӑрӑшнӑ. Ҫапла вӑл, 1875 ҫултан вара Хусанта миссионерсен шкулӗнче /приютра/ ӗҫлеме пуҫласан, унта чӑваш чӗлхи ыйтӑвӗсемпе ятарласа вӗренӳ калаҫӑвӗсем ирттернӗ. Хӑш-пӗр лекцийӗсене Хусан университечӗн "Ученые записки" журналӗнче те пичетлесе кӑларнӑ. Вӑл пулӑшнипе приютра вӗренекен А.И.Добролюбов "Ознакомление с фонетикой и формами чувашского языка посредством разбора и перевода оригинальных статей" ятпа чӑваш чӗлхи фонетикипе морфологийӗ ҫинчен ҫырнӑ кӗнеке кӑларнӑ.

Пурнӑҫӗн юлашки ҫулӗсене Н.И.Золотницкий приютра ӗҫлесе ирттернӗ. Хӑйӗн вӗренекенӗсене вӑл чӗлхе, фольклор тата археологи ыйтӑвӗсене тӗпчеме явӑҫтарнӑ. Вӗренекенсем ун валли чӑвашсен пурнӑҫӗпе йӑли ҫинчен калакан материалсем нумай пухса панӑ.

"Инкек пӗччен ҫӳремест", – теҫҫӗ чӑвашсем. Арӑмӗ вилнӗ хыҫҫӑн /1878 ҫ./ Николай Иванович пӗчченех тӑрса юлать. А.И.Износков В.К.Магницкий патне ҫырнӑ ҫырура каланӑ тӑрӑх, Золотницкисен пӗртен-пӗр хӗрӗ пулнӑ, анчах вӑл та нумай пурӑнайман иккен.

Юлашки икӗ ҫул хушшинче, килте никам та пулманнине шута илсе, Е.А.Малов Н.И.Золотницкие пулӑшса тӑнӑ, пӗччен ҫӗ ҫыннӑн пурнӑҫне ҫӑмӑллатма тӑрӑшнӑ. Вӑрӑма кайнӑ чире ҫӗнеймесӗр Н.И.Золотницкий 1880 ҫулхи ҫу уйӑхӗнче вилсе кайнӑ.

Чӑваш культурипе науки хальхи куна ҫити аталанса, ҫирӗпленсе ҫитнӗ май, уншӑн пуҫламӑш тапхӑрта вӑйне панӑ чаплӑ ҫут ӗҫ ҫыннин, аслӑ тӗпчевҫӗн Николай Иванович Золотницкин ятне халӑх чыслӑн упрать.